cc BY


***Николаева Елена Николаевна***

учитель

МБОУ «Гимназия №6»

г. Новочебоксарск, Чувашская Республика

# ОРГАНИЗАЦИЯ УРОЧНОЙ И ВНЕУРОЧНОЙ ДЕЯТЕЛЬНОСТИ ПО СОХРАНЕНИЮ И РАЗВИТИЮ РОДНОГО ЯЗЫКА

***Аннотация**: в статье представлены некоторые приемы и методы, использованные на уроке чувашского языка с обучающимися 7 класса. Автор подчеркивает, что проведение нетрадиционных уроков с применением игровых, соревновательных моментов дают возможность обучающимся принимать активное участие в процессе обучения, обмениваться знаниями, представлять и отстаивать свою точку зрения, выполнять в группе посильную ученику работу. Вовлечение во внеурочную деятельность, дает возможность изучать интересующие детей темы, раскрыть их таланты.*

***Ключевые слова**: методы и приемы, преподавание чувашского языка, урочная и внеурочная деятельность, пословицы, загадки.*

***Аннотаци**: статьяра 7-мĕш класра чăваш чĕлхи урокĕсенче усă курмалли мелсемпе ăслайсене тишкернĕ. Автор палăртнă тăрăх, вăйă, ăмăрту мелĕсемпе irттернĕ йăлана кĕмен уроксем ачасене аталанма пулăшаççĕ, ушкăнпа ĕçлеме хăнăхтараççĕ. Урок тулашĕнче irттернĕ занятисем ачасен урокра илнĕ пĕлĕвне аталантарма, вĕсен пултарулăхне тупса палăртма май параççĕ.*

***Ключевые слова**: мелсемпе ăслайсем, чăваш чĕлхине вĕрентесси, урокри тата урок тулашĕнчи ĕç-хĕл, ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем.*

Чăваш çĕрĕн, халăхĕн пуласлăхĕ çитĕнекен ăрусен аллинче. Вĕсем хăйсен Тăван çĕршывне, халăхне, чĕлхине юратма, хисеплеме, унпа мухтанма пултарсан тин эпир пуласлăхшăн пăшăрханман пулăттăмăр. Çавăнпа ачасен чĕринче тăван çĕре хаклас, несĕлсемпе мухтанас, чĕлхене упраса хăварас, тăван чĕлхене вĕренес туйăмсене çуратма тăрăшмалла.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Çак тĕллевсене пурнăçлама уроксене те, урок хыççăнхи ĕçе-хĕле те тĕрлĕ майпа йĕркелеме тăрăшатпăр. Хамăр статьяра 7-мĕш класра «Çăпата» темăна вĕрентнĕ чух усă курнă мелсемпе ăслайсене пăхса тухăпăр.

*Йăлана кĕмен урок* ирттерни ачасене хавхалантарма, пĕр-пĕринпе тупăшса ăс пухма, интереслентерсе яма пулăшать. Çавăнпа та урокра ачасене икĕ ушкăна уйăрса тупăшу евĕрлĕ ирттерме шутларăмăр. Ушкăнти ачасен тĕрлĕ роль пулчĕ: *ушкăн ертӳçи* (лидер) – ушкăнра кам тата мĕн тăвассине йĕркелесе пыраканни; *тухса калаçакан* (докладчик) – ушкăн шухăшне каласа параканни; *çыруçă* (секретарь) – ĕç результатне çырса пыраканни; *вăхăт сыхлавçи* (хронометрист) – ĕçе тунă чух вăхăта пăхса тăраканни; *тĕрĕслевçĕ* (контролер) – хатĕр ĕçе тĕрĕслекенни; *шухăш тупакан* (генератор идей) – çĕнĕ шухăшсем сĕнекенни; *вулавçă* (чтец) – текста илемлĕ, тĕрĕс вулаканни.

Урок темине ачасем илемлĕ хутаçри япалана тытса пăхса, куçпа курмасăр пĕлчĕç. Хăйĕн пурнăçĕнче çăпата курман ачана ăна тытса пăхсах пĕлме йывăр пулĕччĕ пуль. Кабинетра та, шкул музейĕнче те урана тăхăнмалли çак пушмак пулнă пирки ачсем ăна уйăрса илессе шантăмăр.

Шкулта ачасене чăваш чĕлхине лингвокультурологи çине таянса вĕрентмелле, ку ĕçре уйрăмах тупмалли сăмахсемпе ваттисен сăмахĕсем пулăшаççĕ [2]. Çăпата çинчен калакан тупмалли юмахсем чăвашсен çеç мар, ытти халăхсен те пулни, ку ată-пушмакпа вĕсем те анлă усă курнине çирĕплетсе парать: чăвашсен, тутарсен («Пĕр шăшийĕн ик хӳре»); вырăссен, украинсен тата латышсен («У одной мыши два хвоста»); белоруссен («Заяц с двумя хвостами»); удмуртсен («У одной крысы два хвоста»).

*Çăпата* сăмахра ытти кĕске сăмахсене шырани ачасене пĕлекен сăмахсене аса илсе, тупăшса (кам ытларах пĕлет) сăмах йышне ӳстерме пулăшать. Тĕслĕхрен, эпир çакăн пек сăмахсем тупрăмăр: *пăта, пăт, çапă, çап, атă, тап, тăп!, апат, апатçă, тапă пата, çат!, çатă.*

«Çăпата – ĕлĕкхи пушмак» текстпа ĕçлесе тĕрлĕ ĕç туса ирттертĕмĕр: словарь сăмахĕсемпе паллашрăмăр, текста вуласа ăнлантăмăр, ыйтусем çине хуравларăмăр, фишбоун туса пĕтĕмлетрĕмĕр. Пулă пуçĕнчи проблемăлла ыйту


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

çакă пулчĕ – «Çăпата мĕнле атă-пушмак?». Сăлтавĕсемпе следствисене çаксене тупса палăртрăмăр:

1-мĕш сăлтав – урана тăхăнмалли пулман; следстви – ĕлĕк çăпата тунă;

2-мĕш сăлтав – йĕри-тавра йывăç нумай пулнă; следстви – çăпатана пушăтран тунă;

3-мĕш сăлтав – ĕлĕкхи пушмак; следстви – халĕ тăхăнмаççĕ;

4-мĕш сăлтав – чухăн пурăннă; следстви – тĕрлĕ халăх çыннисем çăпатапа çӳренĕ.

Хӳринчи пĕтĕмлетĕвĕ – çăпата тĕрлĕ халăх тăхăнса çӳренĕ ĕлĕкхи атă-пушмак. Çапла вара, çăпата вăл наци палли мар, чухăнлăх палли пулнине пĕтĕмлетсе хăвартăмăр.

Кану саманчĕ «Çăпатасăр ан юл» вăййă евĕрлĕ иртрĕ. Ачасем (14 ача) пĕр çавракана тăчĕç. Çавракa варринче 13 çăпата. Кĕвĕ янранă вăхăтра ачасем пĕр-пĕрин хыççăн çавракa тавра утрĕç, ташларĕç. Кĕвĕ чарăнсан кашни хăйне валли çăпата ярса илме тăрăшрĕ. Çăпатасăр юлнă ача вăйăран тухса ӳкрĕ. Вăййă пĕр ача çĕнтерӳçĕ юличчен пычĕ.

Ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлени тăван чĕлхен пуянлăхне, витĕмлĕхне курма пулăшать. Çавăнпа та урокра çăпата çинчен калакан ваттисен сăмахĕсен пайĕсене тупрăмăр, вĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнланма тăрăшрăмăр. Усă курнă ваттисен сăмахĕсем: «Атăпа çăпата юлташ мар», «Чăн – çăпатапа, суя – атăпа», «Çăпата туса хырăм тăрантараймăн»; «Çăпата тума пĕлмесен улаха тухма хушмаççĕ».

Клоуз тест текстпа ĕçленĕ чух меллĕ. Вăл ачасем текст содержанине ăнланнипе ăнланманине уçăмлă кăтартса парать. «Çăпата вăрттăнлăхĕсем» пысăках мар текстпа ĕçленĕ хыççăн клоуз тест ирттертĕмĕр.

1. Çăпатана çăка, хурама, хурăн, юман, хăва йывăççисенчен хатĕрленĕ _____ тунă. 2. Чи çирĕп те çемçе çăпата _____ пушăтĕнчен пулнă.

3. Йывăçран уйăрнă пушăта _____ çыхăра тытнă. 4. Çăпатана çыхас умĕн пушăта _____ талăк хушши шӳтерне. 5. Унтан _____ сӳнĕ те çăпата хуçнă. 6. _____ тунă чух йывăç калăппа тата шĕшлĕпе усă курнă. 7. Пушмак тухса ан ӳктĕр


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

тесе _____ кантрасемпе яваласа çыхнă. 8. Кантрисене те _____ тунă. 9. Çăпатана хуçма _____ та пĕлнĕ. 10. Ытларах вара çăпата хуçасси _____ ĕçĕ пулнă.

11. _____ вăхăтра пĕр мăшăр çăпата çичĕ куна çитнĕ, çуллахи вăхăтра – тăватă куна. 12. Инçе çула тухакан хăйпе пĕрле _____ мăшăр çăпата илнĕ.

Сĕннĕ вариантсем:

| | |
|---|---|
| 1) çипрен, пушăтран, хутран | 7) урана, алла, пуçа |
| 2) çăка, хурăн, хыр | 8) атăран, пушăтран, сăрантан |
| 3) мунчара, пахчара, çенĕкре | 9) никам та, кÿршĕсем те, пурте |
| 4) ăшă сĕтре, вĕри шывра, тутлă кварса | 10) хĕрарăм, арçын, ача |
| 5) хуппине, çулçине, тымарне | 11) хĕллехи |
| 6) тапăчкă, атă, çăпата | 12) 4–5, 14–15, 40–50 |

Урок хыççăнхи ĕç-хĕле тĕрлĕ майпа йĕркелени те ачасен тăван чĕлхене вĕренес, ун çинчен ытларах пĕлес туйăма вăйлатма пулăшать. Наукăпа практика конференцийĕсене хутшăнни ачасене шырав-тĕпчев тума, документсемпе ĕçлеме, çынсемпе хутшăнса ыйтса пĕлме вĕрентет, ачасен тавра курăмне аталантарать [2]. Урок тулашĕнчи ĕçсем ачасен пултарулăхне аталантарма та пулăшаççĕ, хăйсене юмах, сăвă çырса пăхма та хистеççĕ. 4-мĕш класра вĕренекен Николаева Маша çырнă «Ёшка кинемей» юмах сыпăкне вуласа пăхар-ха: «…Сасартăк тĕкĕр умĕнче тăракан Ёшка кинемее курах кайрĕ. Вăл хăйĕн çÿçне турарĕ, тутине сăрларĕ. Тĕнчипе чапа тухнă Шывçă туса кăларакан тутлă шывпа сапăнчĕ. Хăйĕн çине тĕрлĕ енчен пăхрĕ те питĕ кăмăллă юлчĕ. Тылă çине ларса ку тăрăхри пĕртен-пĕр шурлăхри чи чаплă ресторана хăйĕн юлташĕн Кикимочкăн çуралнă кунне вĕçсе кайрĕ. Вăл çитнĕ çĕре ресторанта халăх туп-туллиех пухăннă. Ёшка кинемей хăйĕн юлташĕсене шыраса тупрĕ те вĕсем патневаскарĕ. Кикимочка çамрăк-ха, виç çĕр аллă çул кăна тултарать. …»

Республика шайĕнче ирттерекен «Реклама тĕнчи» конкурса хатĕрленнĕ чух пĕчĕк сăвăсем çырса буклет туса хатĕрлерĕмĕр.

| | |
|---|---|
| *Тĕрлĕ-тĕрлĕ вăйă,*<br>*Вăй виçмелли конкурссем,*<br>*Парнесем, кучченеççем*<br>*Кĕтеççĕ сире, туссем!* | *Тутлă, тĕхĕмлĕ икерчĕ*<br>*Вĕри чей те пÿремеч.*<br>*Пурте пулĕ мĕн кирли -*<br>*Çимелли те ĕçмелли!* |

Ваттисен сăмахĕсемпе паллашни чĕлхен сăнарлăхĕпе витĕмлĕхне туйма тулăшать тесе каланăччĕ ĕнтĕ, анчах та вĕсем хальхи пурнăçра пулса иртекен пулăмсемпе çыхăнсах кайман. Ачасем мăн аслашшĕсемпе асламăшĕсен



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

сăмахлăхĕпе паллашса чĕлхере час-часах усă курма хăнăхсан вĕсене хальхи пурнăçпа çыхăнтарса хăйсем те каларăшсем шутласа кăларма пултараççĕ. 8-мĕш класра вĕренекен ачасемпе наукăпа практика конференцине хатĕрленнĕ чух çакăн пек каларăшсем çуралчĕç: «Вăхăт Сапсан мар, тытса чарма çук», «Айфон – аван япала, анчах ан ман эс тусна», «Интернет пурне те пĕлет, ăна шансан тăн шĕвелет», «Улмуççи çинче груша шырамаççĕ» т.ыт.те.

Чăваш чĕлхи эрнинче квест ирттерни ачасене уйрăмах кăсăклă. Ăçта кайса мĕн шырамаллине пĕрисем чăвашла çырса хатĕрлеççĕ, теприсем тупаççĕ.

Ачан чунне уçас, пуянлатас, аталантарас тесе тунă кашни пĕчĕк ĕç те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Йăлана кĕмен уроксем, урокра ирттернĕ тĕрлĕ ĕç, урок тулашĕнчи вăйăсем, тĕпчев-шырав – пурте тăван чĕлхене упраса хăварас, ăна вĕренес туйăмсене çуратма пулăшакан ĕçсем пулса тăраççĕ.

***Список литературы***

1. Андреев И.А. Чăваш чĕлхи. 7-мĕш класс валли: учебное пособие / И.А. Андреев, Р.И. Гурьева, Н.А. Краснова [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2016. – 255 с.

2. Егорова А.С. Основы исследовательского обучения школьников чувашскому языку / А.С. Егорова // Ашмаринские чтения: сб. материалов XI Междунар. науч.-практ. конф. (Чебоксары, 25 апреля 2019 г.). – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2019. – С. 177–178.

3. Егорова А.С. Чăваш чĕлхине лингвокультурологи çине таянса вĕрентесси / А.С. Егорова; под ред. Ж.В. Мурзина, Г.В. Николаева, С.П. Руссков // Проектирование механизмов реализации образовательных инициатив: материалы I Всерос. научн.метод. конф. (Чебоксары, 22 августа 2017 г.). – Чебоксары: ИД «Среда», 2017. – С. 72–74.

4. Мурзина Ж.В. Итоги реализации федерального проекта по ранней профессиональной ориентации учащихся 6–11-х классов общеобразовательных организаций Чувашской Республики «Билет в будущее» / Ж.В. Мурзина, Л.А. Степанова, А.В. Штыкова // Образование и педагогика: теория, методология, опыт:



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

монография / гл. ред. Ж.В. Мурзина. – Чебоксары: ИД «Среда», 2020. – С. 8–30. – doi:10.31483/r-75109


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)